28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 МАЙ 30 ЮНКУН 103(6854) №

ЧӐВАШ КОММУНИ

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗн, Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховнӑй Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ

Шкулсенчи экзаменсемпе пӗлӳ тӗрӗслевӗсене тӗплӗн ирттерер

Пирӗн шкулсем ответлӑ тапхӑра кӗчӗҫ: майӑн 21-мӗшӗнче шкултан вӗрентсе кӑлармалли экзаменсемпе класран класа куҫармалли пӗлӳ тӗрӗслевӗсем пуҫланчӗҫ.

ССР Союзӗн Совнаркомӗ йышӑннӑ тӑрӑх, кӑҫалхи ҫултан пуҫласа тӑваттӑмӗш, ҫиччӗмӗш тата вуннӑмӗш классенчен вӗренсе тухакансене экзамен тыттармалла тунӑ. Вуннӑмӗш класран экзамен тытса вӗренсе тухакансене ҫитӗнсе ҫитнине пӗлтерекен аттестат параҫҫӗ, вӗренӳре уйрӑмах палӑрнисем ылттӑн тата кӗмӗл медальсем илме тивӗҫлӗ пулаҫҫӗ. Пиллӗкмӗш, улттӑмӗш, саккӑрмӗш тата тӑххӑрмӗш классенче вӗренекенсем пӗлӳ тӗрӗслевӗсем витӗр тухаҫҫӗ.

Государствӑн ҫакӑ питех те паха ӗҫӗ историллӗ тапхӑрта—Хӗрлӗ Ҫар гитлерла захватчиксене ҫӗнтернипе пӗтӗм ҫӗршывра нихҫан пулман патриотла ҫӗкленӳ хумханса хӑпарнӑ тапхӑрта пулса иртет.

Экзамен вӑл—пирӗн шкулпа пирӗн вӗренекенсен пурнӑҫӗнче пысӑк событи пулса тӑрать. Ҫакӑ вӑл вӗренекенсен пӗлӗвӗсем мӗн чухлӗ ҫирӗппине государство тӗрӗслени, вӗренекенсем наукӑсен никӗсӗсене вӗренсе алла илес тӗлӗшпе ӗҫленин итогӗсене пӗтӗҫтерни пулса тӑрать. Ҫакӑнпа пӗрлех вӑл—ҫутӗҫ органӗсем вӑтам шкула ҫӗнӗлле йӗркелес ӗҫе мӗнле пурнӑҫа кӗртсе пынине государство енчен тӗрӗслени пулса тӑрать.

Государствӑн ҫав паха ӗҫне туса ирттерме республикӑри малта пыракан шкулсем тӗплӗн хатӗрленчӗҫ. Ҫав шкулсенче вӗренекенсем программӑпа пӑхнӑ вӗренӳ материалне тимлӗн те тӗплӗн вӗреннӗ, вӗренсе ирттернӗ материала тепӗр хут аса илсе ҫирӗплетес ӗҫе лайӑх организациленӗ. Ҫав шкулсенче вӗренекенсем экзаменсенче хӑйсем мӗн вӗреннине тарӑн та ҫирӗп пӗлнине кӑтартса параҫҫӗ, Х-мӗш класран вӗренсе тухакансем, кунсӑр пуҫне, хӑйсен отвечӗсене туллин тата хӑйсем тӗллӗн ответлеҫҫӗ, малашне аслӑ шкулсенче вӗренме тата практикӑллӑ ӗҫре ӗҫлеме хатӗрленсе ҫитнине кӑтартса параҫҫӗ. Учительсемпе экзамен комиссийӗсем чылайӗшӗсем хӑйсем умне лартнӑ задачӑсене тӗрӗс ӑнланса илнӗ, вӗсем хӑйсен ӗҫӗ ҫине тимлӗн пӑхаҫҫӗ, ачасен пӗлӗвӗсене объективлӑн тӗрӗслеҫҫӗ.

Партин нумай райкомӗсемпе райсоветсен исполкомӗсем шкулсенче экзаменсемпе пӗлӳ тӗрӗслевӗсем мӗнле пынипе куллен интересленеҫҫӗ, ҫав ӗҫе тимлӗн хутшӑнса пыраҫҫӗ тата шкулсем ҫак кунсенче мӗнле ӗҫленине кирлӗ пек контроллесе тӑраҫҫӗ. Хӑшпӗр районсенче парти райкомӗсемпе райисполкомсем ҫутӗҫ отделӗсемпе шкулсене экзаменсем ирттерме кирлӗ условисем туса пама тӑрӑшаҫҫӗ: интернатсемпе общежитисем организацилеме, ачасене апатлантарас ӗҫе йӗркелеме тата ытти ӗҫсене тума пулӑшаҫҫӗ.

Ҫапла, сӑмахран, Канаш районӗнчи 18 шкулта ирхи вӗри апат организациленӗ, Красноармейски районра Х-мӗш класра вӗренекенсене шкулта виҫӗ хутчен апатлантармалла тунӑ, Ҫӗрпӳ районӗнче кашни вӗренекен ача валли 5-шер килограмм аш, 8-шар килограмм тулӑ ҫӑнӑхӗ, 25-шер ҫӑмарта тата ытти те уйӑрнӑ.

Анчах ҫакна та палӑртмалла: хӑшпӗр районсемпе шкулсенче экзаменсемпе пӗлӳ тӗрӗслевӗсем ирттерес ӗҫре пысӑк ҫитменлӗхсем пур. Уйрӑм учительсемпе экзамен комиссийӗсен членӗсем вӗренекенсен пӗлӗвӗсене государство енчен тӗрӗслес ӗҫ мӗн тери паха та ответлӑ вырӑн йышӑнса тӑнине ӑнланса илмен, ҫак ӗҫ ҫине вӗсем государство енчен мар, хӑйсен шкулӗ, хӑйсен класӗ енчен кӑна пӑхаҫҫӗ. Начар тӗслӗхсем сахалтарах пулччӑр тесе, хӑшпӗр учительсемпе экзамен комиссийӗсен членӗсем паллӑсене ӳстерсе лартаҫҫӗ, экзаменра ыйтусем ҫине ответлеме вӗренекенсене хӑйсем енчен каласа пулӑшаҫҫӗ, пӗр тивӗҫсӗрех «пиллӗк» паллӑсем лартаҫҫӗ. Кӑҫалхи экзаменсемпе пӗлӳ тӗрӗслевӗсенче вӗренекенсенчен ытларах ыйтма кирли ҫинчен манаҫҫӗ.

Муркаш районӗнчи Йӳҫкасси вӑтам шкулӗнчи учитель Васильев тата ассистент Зимина юлташсем Х-мӗш класра вӗренекен Тимофеева ҫитӗнсе ҫитнине пӗлтерекен аттестат илме ҫырнӑ сочинение тивӗҫсӗрех «пиллӗк» паллӑпа хакланӑ. Анчах ҫав сочинение питӗ кӗскен, типӗ чӗлхепе ҫырнӑ, унта стильпе грамматика йӑнӑшӗсем питӗ нумай.

Ҫав сиенлӗ ӗҫе, тӗрӗссипе государствӑна хирӗҫле ӗҫе халех пӗтермелле. Учительпе экзамен комиссийӗн членӗсем, тивӗҫсӗрех пысӑк паллӑсем лартса параҫҫӗ пулсан, вӗсем ҫапла вара государствӑна улталас ҫул ҫине тӑраҫҫӗ. Тӑван ҫӗршыв пирӗн ҫамрӑксене хут лайӑх пӗлекен, культурӑллӑ та пысӑк пӗлӳллӗ ҫынсем пулма хушать. Аслӑ шкул лайӑх вӗренсе хатӗрленнӗ ҫынсене кӗтет. Учительсемпе ҫутӗҫ пайӗсен работникӗсем ҫакна асра тытма тивӗҫлӗ: экзамен тытмалли программа ыйтнине вӗҫне ҫитиччен тивӗҫтерекен вӗренекенсем кӑна ҫитӗнсе ҫитнине пӗлтерекен аттестата илме пултараҫҫӗ. Наукӑсен никӗсӗсене вӗренсе алла илейменнисем, дисциплинӑна тытма пӗлменнисем хӑйсем ҫитӗнсе ҫитни ҫинчен калакан документа илме пултараймаҫҫӗ.

Иртнӗ эрнери экзаменсем ҫакна кӑтартса пачӗҫ: хӑшпӗр ҫӗрте ачасем иртнӗ ҫулсенче вӗреннисене мӗнле пӗлнине тӗрӗслемеҫҫӗ, ҫапла вара экзаменсем ирттермелли инструкцие пӑсаҫҫӗ. Вӗренекенсем шкулта илнӗ пӗлӳсемпе практикӑллӑ ӗҫре мӗнле усӑ курма пултарнине те ҫителӗксӗр тӗрӗслеҫҫӗ.

Уйрӑм шкулсенче учительсемпе экзамен комиссийӗсен членӗсем ҫыру ӗҫӗсене, уйрӑмах вырӑс чӗлхипе тата литературӑпа ҫырнӑ ӗҫсене тӗрӗслесе тухасси ҫине ответсӑррӑн пӑхаҫҫӗ. Учительсем тӗрӗслесе тухнӑ хыҫҫӑн та хӑшпӗр пысӑк йӑнӑшсем ҫав ӗҫсенче палӑрмасӑрах юлаҫҫӗ.

Хӑшпӗр районсенчи ҫутӗҫ пайӗсен заведующийӗсем, экзаменсем вӑхӑтӗнче ачасен пӗлӗвӗсене объективлӑн тӗрӗслемелле тӑвас вырӑнне, государствӑна хирӗҫле ҫул ҫине тӑраҫҫӗ. Ҫапла, сӑмахран, Шупашкар районӗнчи ҫутӗҫ пайӗн заведующийӗ Михайлов, икӗ ҫӗрте тӑваттӑмӗш классенчи ачасенчен ҫурри вырӑс чӗлхипе «иккӗ» паллӑ илмелӗх кӑна ҫырни ҫинчен пӗлсен, Наркомпросран ҫав классенчи ачасене урӑх текст тӑрӑх тепӗр хут экзамен тыттарма ирӗк пама ыйтнӑ.

Хӑшпӗр районсенче экзаменсем вӑхӑтӗнче вӗренекенсем валли йӗркеллӗ условисем туса парасси ҫине кирлӗ пек ҫавӑрӑнса пӑхмаҫҫӗ. Ҫапла, сӑмахран, Кӳкеҫ вӑтам шкулӗнчи Х-мӗш класра вӗренекен ачасем валли пурӑнма ҫурт та, апат-ҫимӗҫ те тупса паман. Кашни экзамен хыҫҫӑнах вӗренекенсен 15—17 километра ҫити киле ҫуран утма лекет. Вӗренекенсем ҫапла вара ытти предметсем тӑрӑх экзамена хатӗрленмелли паха вӑхӑта киле утса ӳресе ирттереҫҫӗ. Шупашкар райсовечӗн исполкомӗпе парти райкомӗ Х-мӗш класра вӗренекенсем валли шкулта интернатсем тӑвас тата вӗренекенсене апатлантарас ӗҫе организацилесси ҫинчен парти Обкомӗн бюровӗ йышӑннӑ решение пурнӑҫа кӗртмен. Ҫавӑн пек фактсем ытти хӑшпӗр районсенче те палӑраҫҫӗ.

Экзаменсенче ҫирӗп те ӗҫлӗ йӗрке пулмалла. Учительсен вӗренекенсем шиклепессине, ҫухалса каяссине пӗтерме пулӑшмалла, ачасене хӑйсен вӑйӗсемпе пӗлӗвӗсене шанса тӑма хавхалантармалла. Комсомолӑн шкулсенчи организацийӗсен экзамен тытакан кашни ачана экзаменра ҫирӗп пулма хаваслантармалла.

Парти райкомӗсен шкулсенчи экзаменсемпе пӗлӳ тӗрӗслевӗсем мӗнле пынипе куллен интересленмелле, ҫав ыйтӑва райком бюровӗн ларӑвӗсенче сӳтсе-явмалла, палӑрнӑ ҫитменлӗхсене ҫийӗнчех пӗтермелле, экзаменсем ирттермелли инструкцие тӗрӗс пурнӑҫа кӗртес тесе, ҫутӗҫ работникӗсенчен ытларах ыйтмалла.

ХИСЕП ХӐМИ

Ӗҫсынни депутачӗсен райсовечӗсен исполкомӗсемпе ВКП(б) райкомӗсем тӑратнӑ тӑрӑх, ҫуракинче тухӑҫлӑн тата лайӑх ӗҫленӗшӗн малта пыракан ҫак колхозсене республикӑри ХИ СЕП ХӐМИ ҫине кӗртнӗ:

ШӐМӐРШӐ РАЙОНӖ ТӐРӐХ:

46. **Максим Горький ячӗпе тӑракан колхоз** (председателӗ **Николаев** юлташ). Колхоз тӗштырӑсене лайӑх пахалӑхпа 4 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ.

47. **«Новая деревня» колхоз** (председателӗ **Давыдов** юлташ). Колхоз 135 гектар тӗштырра агротехника енчен лайӑх пахалӑхпа 7 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ. Тӗштырӑсен лаптӑкне пӗтӗмпех машинӑпа ретӗн-ретӗн акнӑ.

48. **«Динамо» колхоз** (председателӗ **Кудряшов** юлташ). Колхоз 200 гектар тӗштырра лайӑх пахалӑхпа 10 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ.

49. **«Заря» колхоз** (председателӗ **Тимофеев** юлташ). Колхоз 190 гектар тӗштырра лайӑх пахалӑхпа 9 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ.

50. **«Канаш» колхоз** (председателӗ **Богатов** юлташ). Колхоз тӗштырӑсене агротехника енчен лайӑх пахалӑхпа 5 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ.

51. **«Пламя труда» колхоз** (председателӗ **Осипов** юлташ). Колхоз 177 гектар тӗштырра 10 ӗҫ кунӗнче лайӑх пахалӑхпа акса пӗтернӗ.

ШУПАШКАР РАЙОНӖ ТӐРӐХ:

52. **«Первое Мая» колхоз** (председателӗ **Н. Н. Николаев** юлташ). Колхоз 360 гектар тӗштырра лайӑх пахалӑхпа 9 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ.

53. **Молотов ячӗпе тӑракан колхоз** (председателӗ **А. П. Петров** юлташ). Колхоз 130 гектар тӗштырра 7 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ. Тӗштырӑсен пӗтӗм лаптӑкне машинӑпа ретӗн-ретӗн акнӑ.

54. **Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз** (председателӗ **Е. Е. Петрова** юлташ). Колхоз 140 гектар тӗштырра лайӑх пахалӑхпа 6 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ. Тӗштырӑсен пӗтӗм лаптӑкне машинӑпа ретӗн-ретӗн акнӑ.

55. **Крупская ячӗпе тӑракан колхоз** (председателӗ **А. Г. Кудряшов** юлташ). Колхоз 156 гектар тӗштырра лайӑх пахалӑхпа 7 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ.

56. **«Правда» колхоз** (председателӗ **А. В. Игнатьев** юлташ). Колхоз 118 гектар тӗштырра 7 ӗҫ кунӗнче лайӑх пахалӑхпа акса пӗтернӗ.

57. **«Коминтерн» колхоз** (председателӗ **А. В. Маркизова** юлташ). Колхоз тӗштырӑсене 7 ӗҫ кунӗнче лайӑх пахалӑхпа акса пӗтернӗ.

ХӖРЛӖ ЧУТАЙ РАЙОНӖ ТӐРӐХ:

58. **«Коминтерн» колхоз** (председателӗ **И. П. Кузнецов** юлташ, пуҫламӗш парторганизаци секретарӗ **Ефимова** юлташ). Колхоз 221 гектар тӗштырра 9 ӗҫ кунӗнче лайӑх пахалӑхпа акса пӗтернӗ.

Етӗрне районӗ ҫураки планне тултарчӗ

ЕТӖРНЕ, майӑн 29-мӗшӗ. (ТЕЛЕФОНПА). Етӗрне районӗнчи колхозсем майӑн 27-мӗшӗ тӗлне ҫураки планне тултарчӗҫ. План тӑрӑх 10.557 гектар акас вырӑнне 10.562 гектар акнӑ. Тӗштырӑсемпе пӑрҫа йышши культурӑсем акмалли плана 104 процент тултарнӑ. Ҫӗрулми лартмалли плана та пӗтӗмпех пурнӑҫа кӗртнӗ: 1.800 гектар вырӑнне 1.806 гектар лартнӑ.

Ҫуракине «8 марта», «Путь Ленина», «1-ое августа», «Красный маяк», Буденный тата Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозсем уйрӑмах ӑнӑҫлӑн тата организованно ирттерчӗҫ.

Районри колхозсемпе колхозниксем Кувакино районӗнчи колхозсене 1.200 тонна ҫӗрулми вӑрлӑхӗ парса пулӑшрӗҫ. Вӑл шутра Мичурин ячӗпе тӑракан колхоз 130 центнер, Буденный ячӗпе тӑракан колхозпа «Ленинский завет» колхоз 85-шер центнер ҫӗрулми вӑрлӑхӗ пачӗҫ.

Халӗ ҫуртырӑсене планран ирттерсе акатпӑр.

А. СОМОВ.
ВКП(б) Етӗрне райкомӗн секретарӗ.

Калинино районӗ ҫураки планне тултарнӑ

Калинино районӗнчи колхозсем, майӑн 28-мӗшӗ тӗлне 12.060 гектар акса, ҫураки планне тултарнӑ.

Хӗрлӗ Чутай, Елчӗк, Улатӑр МТС-ӗсем ҫураки планне тултарнӑ

Хӗрлӗ Чутай МТС-ӗ (директорӗ Михеев юлташ) ҫураки вӑхӑтӗнче тракторсемпе ӗҫлемелли плана 101,4 процент тултарнӑ. Ҫураки вӑхӑтӗнче уйрӑмӑнах Изенкин ертсе пыракан 1-мӗш бригада лайӑх ӗҫленӗ. Вӑл хӑйӗн планне 128 процент тултарнӑ. Падюков ертсе пыракан 2-мӗш бригада та хӑйӗн планне 128 процент тултарнӑ, Афондеркин ертсе пыракан бригада 125 процент тултарнӑ.

Елчӗк МТС-ӗ (директорӗ П. Яшин юлташ) майӑн 25-мӗшӗ тӗлне ҫураки вӑхӑтӗнче тракторсемпе ӗҫлемелли плана 111 процент тултарнӑ.

Улатӑр МТС-ӗ (директорӗ Г. Иванов юлташ) ҫуркунне тракторсемпе ӗҫлемелли плана 103 процент тултарнӑ.

МТС юбилее хатӗрленет

ВӐРНАР. Тракторпа ӗҫлемелли иртнӗ ҫулхи плана ӑнӑҫлӑн тултарнӑшӑн СССР Наркомземӗн тата ЧАССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавӗсене илнӗ Вӑрнар МТС-ӗ кӑҫалхи ҫуракине пур енчен те тӗплӗн хатӗрленсе тухрӗ. Уйрӑмах кунта тракторсемпе вӗсенчен кӑкарса ӗҫлемелли инвентарьсене кӑтартуллӑ юсаса ҫитернӗ, лайӑх пӗлекен кадрсем вӗрентсе хатӗрленӗ.

Ҫуракине тухас умӗн МТС коллективӗ, Полтава облаҫӗнчи Лохвица МТС коллективӗ чӗнсе каланине йышӑнса, машинно-тракторнӑй станцисен Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвне хутшӑнчӗ. Трактористсемпе трактористкӑсем кӑҫалхи ялхуҫалӑх ҫулӗнче татах та лайӑхрах ӗҫлеме пулса, тӑтӑклӑ обязательствӑсем илчӗҫ. Илнӗ обязательствӑсене пурнӑҫлассишӗн вӗсем ҫуракин малтанхи кунӗсенчен пуҫласах хастарлӑн кӗрешме тытӑнчӗҫ.

Ҫапла, МТС ҫуракинче тракторпа ӗҫлемелли плана 180 процент тултарнӑ. Ҫуракинче уйрӑмӑнах комсомолецсемпе ҫамрӑксен бригадисем паха тӗслӗхсем кӑтартрӗҫ. Алексеев юлташ ертсе пыракан 7-мӗш трактор бригади хӑйӗн ҫураки планне 202 процент, Мишаков юлташ ертсе пыракан 2-мӗш бригадӑпа Михайлов юлташ ертсе пыракан 14-мӗш бригада 200 процента яхӑн тултарчӗҫ.

Трактористсемпе трактористкӑсенчен те пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлекенсем сахал мар пулчӗҫ. М. Большаков тракторист, газогенераторлӑ тракторпа ӗҫлесе, нормӑпа 60 гектар сухалас вырӑнне 120 гектар ытла сухаланӑ. СТЗ тракторпа ӗҫлесе, П. Егорова трактористка нормӑпа 43 гектар сухалас вырӑнне 110 гектар ытла сухаланӑ. У. Порфильева, Н. Григорьева, В. Капирова, А. Иванова трактористкӑсем ҫав тракторпа 90-шар гектар ытла сухаланӑ.

МТС колхозсене тӗштырӑсене кӗске срокра, пысӑк пахалӑхпа акса хӑварма пулӑшрӗ. Ҫуракинче агротехника правилисене тӗрӗс пурнӑҫласа пынӑ. Халӗ тракторсем ирхи ҫӗртме сухалама тытӑнчӗҫ.


МТС коллективӗ Чӑваш республики 25 ҫул тултарнине тивӗҫлипе кӗтсе илме хатӗрленет. Юбилей кунӗ тӗлне тракторпа ӗҫлемелли ҫулталӑкри плана 70 процентран кая мар, ялхуҫалӑх ҫулӗ вӗҫленнӗ тӗле ҫулталӑкри плана икӗ хут ирттерсе тултарма пулчӗ.

Кунпа пӗрлех МТС работникӗсем юбилей тӗлне МТС картишне илемлӗх кӗртес тӗлӗшпе хӗрӳллӗн ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. Кунта 3 гектар ҫине улма йывӑҫҫисемпе ҫырла йывӑҫҫисем лартса сад хывса хӑварнӑ, ҫӗнӗ мунча туса ӗҫе янӑ, сарай туса лартнӑ. Картиш тавра ҫӗнӗ карта тытаҫҫӗ, картишӗнче аллейӑсем тӑваҫҫӗ, лашапа ҫӳремелли ҫулсене юсаса ҫӗнетеҫҫӗ.

МТС юбилее ӗҫри ҫитӗнӳсемпе тата хуҫалӑха йӗркене кӗртсе илемлетнипе кӗтсе илет.

Еф. ВОЛКОВ.
(Хамӑр корр.).

Совет Союзӗ тӑрӑх



Ӳкерчӗк ҫинче: Горький хулинчи фронтовик арӑмӗ **Н. С. Солдатова** хӑйӗн ачисемпе. Вӑл сакӑр ача пӑхса ӳстерет. Боец ҫемьине хуларӑ общество организацийӗсем лайӑх пӑхаҫҫӗ, уншӑн тӑрӑшаҫҫӗ. Горсовет ӑна пӗр ӗне панӑ. П. МОЗЖУХИН фотоӳкерчӗкӗ. (ТАСС фотохроники).

Тӑлӑх ачасемшӗн тӑрӑшни

Отечественнӑй вӑрҫӑ ҫулӗсенче темиҫе пин ӗҫсынни фронтра вилнӗ е гитлеровецсем асаплантарса вӗлернӗ ҫынсен ачисене усрава илчӗҫ. Совет патриочӗсен ырӑ ӗҫӗн пуҫарӑвӗ пирӗн Тӑван ҫӗршыври нумай хуласемпе ялсене анлӑн сарӑлчӗ. Тылри ӗҫсыннисем, ашшӗ-амӑшӗсӗр тӑрса юлнӑ ачасене усрава илсе, вӗсене хӑйсен ачисем пек пӑхса усраҫҫӗ. Вӗсем валли ача яслисем, ача ҫурчӗсем, столовӑйсем, ҫӗвӗ мастерскойӗсем организациленӗ.

Халӗ РСФСР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗ тӑлӑх ачасене пулӑшассине малалла лайӑхлатас тӗлӗшпе уйрӑм мероприятисем палӑртса хунӑ. Тӑлӑха юлнӑ ачасене пурне те ача ҫурчӗсене вырнаҫтараҫҫӗ те ӗҫсыннисене усрава параҫҫӗ. Ачасене усрава илнӗшӗн тӳлекен пособисене мӗн чухлӗ тӗрӗс те вӑхӑтра тӳлесе пынине тӗрӗслеме тытӑннӑ. Ҫуллахи вӑхӑтра усрава илнӗ ачасене чи малтанах хула тулашӗнчи лагерьсене тата санатори площадкисене яраҫҫӗ, кӗнекесемпе хут таврашӗсем, кӗпе-тумтирсем тата ытти те параҫҫӗ.

Колхозсен укҫи-тенкипе пур ҫӗрте те ача ҫурчӗсем организациленӗ. Ҫав ача ҫурчӗсенче вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче вилнӗ хресченсен ачисене пӑхса ҫитӗнтереҫҫӗ. РСФСР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗ колхозсен ҫакӑн пек ача учрежденийӗсене пулӑшу пама, уйрӑм илсе кӑтартсан, вӗсене квалификациллӗ воспитательсен кадрӗсене хатӗрлесе пама йышӑннӑ. (ТАСС).

Ялхуҫалӑх машинисем тӑвакан ҫӗнӗ предприятисем

Главсельмашӑн главнӑй инженерӗпе А. В. Гончаров юлташпа калаҫни

Главсельмашӑн вӑрҫӑччен тӗрлӗ ялхуҫалӑх машинисем, инвентарь тата запаслӑ пайсем туса тӑнӑ чи пысӑк предприятийӗсем халӗ каллех ҫав япаласене туса кӑларма пуҫлаҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен производство лаптӑкне ӳстереҫҫӗ. Ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах халь ҫӗнӗ заводсем тӑваҫҫӗ.

Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Совет Союзӗн хӗвелтухӑҫӗнчи районӗсенче ялхуҫалӑх машинисем тӑвакан 8 предприяти тума пуҫланӑ. Ҫав заводсен производство лаптӑкӗ халех те 180 пин тӑваткӑл метртан иртет. Красноярскра комбайнсем тӑвакан заводӑн пӗрремӗш черетпе хута янӑ, ҫав завод 400 комбайн туса кӑларнӑ та ӗнтӗ. Килес ҫул пӗтнӗ тӗле вӑл ҫулталӑкра 10.000 комбайн туса кӑларакан пулса тӑрать. Ҫапла вара хӗвеланӑҫ Ҫӗпӗрпе Хӗвелтухӑҫ Ҫӗпӗрти, Прҫетри Хӗвелтухӑҫӗнчи тата Алтай крайӗнчи районсене ҫителӗклӗ таран комбайнсем туса пама пултарать. Вӑрҫӑччен унта комбайнсене Украинӑпа Ҫурҫӗр Кавказран илсе пырса тӑнӑ.

Кӑҫал Рубцовскра ҫӗр ӗҫлекен машинӑсем тӑвакан заводӑн («Алтайсельмашӑн») пӗрремӗш черетне туса пӗтереҫҫӗ. Ҫав заводра халь лаша кӳлекен плугсем йышлӑн тӑваҫҫӗ, трактор туртакан 5 корпуслӑ плугсем тума пуҫланӑ. Ҫавӑн пек плугсем 100 ытла туса кӑларнӑ та ӗнтӗ.

1942—43 ҫулсенче Узбекистанра икӗ завод (Ташкентри заводпа Чирчикри завод) тата Фрунзе хулинче пӗр завод туса пӗтерсе хута янӑ. Ташкентри завод ӳсентӑрансене сиен кӳрекенсемпе кӗрешмелли аппаратура туса кӑларать, ҫакӑ Вӑтам Азишӗн питӗ паха пулса тӑрать; Чирчикри завод ҫӗрмамӑкӗ акакан тата ҫӗрмамӑкӗ пухакан машинӑсем тӑвать; Фрунзери завод—тырӑ выракан машинӑсем, лаша кӳлекен кӗреплесем тӑвать тата техникӑллӑ культурӑсем ҫулмалли машинӑсем тӑвас ӗҫе организацилет. Ялхуҫалӑх машинисем тӑвакан ҫак виҫӗ ҫӗнӗ завод Вӑтам Ази пирӗн ҫӗршывӑн паха районӗсенче ялхуҫалӑхне механизацилес задачӑна татса пама чылай пулӑшаҫҫӗ.

Акмолинскри завода («Казахсельмаша») туни питӗ паха пулса тӑрать. Ҫав завод акакан, ҫӗр ӗҫлекен тата культурӑсем вырса пухакан машинӑсем (пуринчен ытла лаша кӳлекен машинӑсем), сортировкӑсем, тырӑ выракан машинӑсем, культиваторсем, сенокосилкӑсем тумалла. Кӑҫал ҫав заводӑн темиҫе цехне (пӗтӗмпе 17.000 тӑваткӑл метр талккӗш) тата электростанци туса лартаҫҫӗ.

Пенза облаҫӗнчи Каменка районӗнче трактор туртакан сеялкӑсем, сенокосилкӑсем тата чӗкӗнтӗр акакан сеялкӑсем тӑвакан завод тӑваҫҫӗ. Курганра—«Уралсельмаш» ятлӑ завод тӑваҫҫӗ, унӑн пӗрремӗш черечӗ ҫак ҫул вӗҫӗнче ӗҫлеме пуҫлать. Калинин облаҫӗнчи Бежецк районӗнче—йӗтӗн машинисем тӑвакан завод тума пуҫланӑ.

Ҫакӑнпа пӗр вӑхӑтрах нимӗҫ оккупанчӗсем ишӗлтернӗ заводсене те юсаҫҫӗ. Харьковри «Серп и Молот» заводра темиҫе цеха хута янӑ тата сложнӑй молотилкӑсем тума пуҫланӑ. Запорожьери «Коммунар» заводра 28.000 тӑваткӑл метр талккӗш цехсене юсаса хута янӑ. Завод тырӑ выракан машинӑсем, трактор сноповязалкисем тума пуҫлать. «Ростсельмаш» завод ялхуҫалӑх машинисем валли запаслӑ пайсем тума пуҫланӑ; трактор сноповязалкисем тата ытти машинӑсем тума пуҫлать. Ростоври «Красный Аксай» завод культиваторсем тӑвать. Осипенко хулинче Майӑн 1-мӗшӗ ячӗпе тӑракан «Гомсельмаш» завода туса пӗтереҫҫӗ.

1945 ҫулта пирӗн заводсем ялхуҫалӑх машинисем тата запаслӑ пайсем чылай ытларах туса кӑлараҫҫӗ. (ТАСС).

Шкулсенчи экзаменсемпе пӗлӳ тӗрӗслевӗсем пирки ирттернӗ радиоперекличка

Чӑваш республикинчи шкулсенче пыракан экзаменсемпе пӗлӳ тӗрӗслевӗсем пирки ӗнер радиоперекличка пулса иртрӗ. Радиоперекличкӑра Чӑваш АССР Совнаркомӗн председателӗ Матвеев юлташ, ВКП(б) Обкомӗн секретарӗсем Азахов тата Вишняков юлташсем, Чӑваш АССР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссарӗ Макаров юлташ, ВКП(б) Обкомӗн шкул отделӗн заведующийӗ Шалфеева юлташ, ВЛКСМ Обкомӗн секретарӗ Михайлов юлташ, ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗн шкул отделӗн инструкторӗ Черникова юлташ, РСФСР Наркомпросӗн инспекторӗ Филиппов юлташ тата ыттисем те пулчӗҫ.

Районсенче экзаменсемпе пӗлӳ тӗрӗслевӗсем мӗнле пыни ҫинчен Ишлей райҫутӗҫ пайӗн заведующийӗ Гагарин юлташ тата ВКП(б) Ишлей райкомӗн секретарӗ Пидуганов юлташ, Ҫӗрпӳ райҫутӗҫ пайӗн заведующийӗ Альбатрос юлташ тата ВКП(б) Ҫӗрпӳ райкомӗн секретарӗ Свешников юлташ, Шупашкар райҫутӗҫ пайӗн заведующийӗ Михайлов юлташ тата ыттисем те каласа пачӗҫ.

Перекличка вӗҫӗнче ВКП(б) Обкомӗн пропаганда енӗпе ӗҫлекен секретарӗ Вишняков юлташ шкулсемпе ҫутӗҫ органӗсем мӗнле ӗҫлени ҫинчен тӗплӗн каласа пачӗ. Вӑл хӑйӗн сӑмахӗнче экзаменсемпе пӗлӳ тӗрӗслевӗсем вӑхӑтӗнче вӗренекенсенчен ҫирӗпрех ыйтма кирлине кӑтартса пачӗ. Вишняков юлташ экзаменсемпе пӗлӳ тӗрӗслевӗсен малтанхи кунӗсенче уйрӑм шкулсемпе райҫутӗҫ пайӗсем тунӑ ҫитменлӗхсене критиклерӗ, парти райкомӗсемпе райисполкомсене ҫав ҫитменлӗхсене пӗтерес ӗҫре шкулсене пулӑшма чӗнчӗ.

Чӑваш АССР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссарӗ Макаров юлташ хӑйӗн сӑмахӗнче шкулсен директорӗсемпе райҫутӗҫ пайӗсен заведующийӗсене шкулсенче экзаменсемпе пӗлӳ тӗрӗслевӗсем пирки РСФСР Наркомпросӗ панӑ инструкцие ҫирӗппӗн пурнӑҫа кӗртсе пыма хушрӗ.

Ҫулйӗр строительствинчи ҫирӗмкунлӑх

Ҫирӗмкунлӑха чылай колхозсем хутшӑнман

МУРКАШ, майӑн 28-мӗшӗ. (Телефонпа). Хӑшпӗр колхозсем ҫулйӗр строительствин ҫирӗмкунлӑхне хутшӑнчӗҫ. Шурча ял Советӗнчи «Герой» колхоз Муркаш шывӗ урлӑ кӗпер хывнӑ. Лантӑшри «Красная Чувашия» колхоз Горькипе Хусан хушшинчи мӑн ҫула 5 километр тӑршшӗ якатнӑ. Анчах та районри чылай колхозсем ҫулйӗр ӗҫне тытӑнман-ха. Ҫӗнъял Муркаш ҫумӗнчи кӗпер кӗҫ-вӗҫ йӑтӑнса анас пек пулин те, Сталин ячӗпе тӑракан колхоз ҫак кӗпере юсама васкамасть-ха. Муркаш ял Совет исполкомӗн хӑйӗн территорине кӗрекен ытти кӗперсене те юсама тӑрӑшмалла.

Ҫирӗмкунлӑх вӑхӑтӗнче районри юсамалли ҫулсемпе кӗперсене пурне те юсаса тухмалла. Уйӑхлӑхри ӗҫсене ертсе пыракан районри штабӗн оперативлӑрах ӗҫлес пулать.

Ф. МАЛЫШКИН.

Йывӑҫ лартаҫҫӗ

Комсомольски район кӑҫалхи ҫулйӗр строительствине лайӑх хатӗрленнӗ. Ҫулсене ҫӗнӗрен тума тата юсама кирлӗ чулпа хӑйӑра тата йывӑҫ материалсене ҫителӗклӗ хатӗрленӗ. Ку тарӑнччен районри чылай ҫулсене пӗр хут юсаса тухнӑ. Халӗ пысӑкрах ҫулсемпе кӗперсене юсаҫҫӗ.

Районри ӗҫсыннисем ҫулйӗрсене юсанипе пӗрлех вӗсене йывӑҫ лартса илемлетеҫҫӗ. Ҫулсем хӗррине ку тарӑнччен пурӗ 40.500 тӗп йывӑҫ лартнӑ. Лартма татах та 1200 шӑтӑк чавнӑ.

Комсомольски район ҫулйӗр ӗҫӗпе куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялав тытать. Район ҫав ялава кӑҫал та хӑйӗн аллинчех хӑварасса шанма пулать.

ПИРĔН ПАТТĂР ЗЕМЛЯКСЕМ

Герой ятне мана мĕншĕн пачĕç

Пирĕн редакци Совет Союз Геройĕ Илья Григорьевич Мешаков юлташран çыру илчĕ. Вăл Муркаш районĕнчи Пăсăрман ялĕнче çуралса ÿснĕ. Хальхи вăхăтра Австри çĕрĕ çинче пурăнать.

Аяларахра унăн çырăвне пичетлетпĕр.

Унтанпа çулталăк иртрĕ ĕнтĕ. Тискер тăшмана хăваласа, иртнĕ çулхи апрельре пирĕн часть Кăнтăр Буг шывĕ патне çитрĕ. Пирĕн умма çав шыв урлă каçас задача тухса тăчĕ.

Пурнăçри паллă куна—апрелĕн 26-мĕшне—лайăх астăватăп. Çăмăрлă çанталăк тăчĕ вăл кун. Каçалапа çăмăр чарăнчĕ.

Пире, автоматчиксене, часть командирĕ çакăн пек приказ пачĕ: «Кăнтăр Буг шывĕ урлă каçмалла та шывăн сылтăм енче малалла çапăçма вырăн йышăнмалла».

Каç çав тери тĕттĕмччĕ. Тăшман янă çурă ракетăсем кăна çутата-çутата летчĕç.

Акă автоматчиксен малтанхи ушкăнĕ—6 боец—кимĕ çине ларчĕ. Вĕсен шутĕнче—эпĕ те. Кимĕ шывăн сулахай енчен сылтăм енне хуллен те лăпкăн хусканчĕ.

Нимĕçсем пире çапах та сисрĕç. Вĕсем автоматсенчен пеме тытăнчĕç. Анчах эпир, çула улăштара-улăштара пырса, шыв урлă ăнăçлăнах каçрăмăр. Çĕр çине тухсан, тăшман татах та вăйлăнрах çунтарма пуçларĕ. Каялла чакма çук. Мĕн пулсан та малаллах каймалла! Пирĕн боецсем тăшман çинелле ыткăнчĕç. Умра—çÿлĕ чул стена. Çăмăл мар пулчĕ ун урлă каçма. Чи малтан эпĕ каçрăм. Каçрăм та фрицсен пулемечĕ çине гранатăсем вăркăнтартăм. Пулемет шăпланчĕ. Вара эпĕ тăшман траншейине сикрĕм. Траншейăри 4 нимĕçпе манăн автоматпа персе те, прикладпа çапса та çапăçма лекрĕ. Иккĕшне леш тĕнчене ăсатрăм, иккĕшне тыткăна илтĕм. Çак вăхăтра ман пата юлташсем те пырса ĕркĕрчĕç.

Урса кайнă нимĕçсем пире сирсе ывăтасшăн пулчĕç. Темиçе ушкăна пĕрлешрĕç те пире хирĕç атакăна тухрĕç. Анчах эпир вĕсен атакине лайăххах путлантартăмăр. Вуншар фашист, пирĕн çине пырсанскерсем, тăсăла-тăсăла ÿкрĕç. Эпĕ хам кăна вунсаккăрĕшне вĕлертĕм. Çак çапăçура тăшманăнне 4 пулемет туртса илтĕмĕр, 4 нимĕç тыткăна лекрĕç. Çапла эпир Кăнтăр Бугăн сылтăм енче 500 метр сарлакĕш лаптăк туртса илтĕмĕр, хамăр чаçе шыв урлă каçма май туса патăмăр.

Кăнтăр Буг шывĕ урлă каçассишĕн пынă хаяр çапăçусенче паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн Правительство мана Совет Союз Геройĕн хисеплĕ ятне пачĕ.

Илья МЕШАКОВ.

СОВЕТ СОЮЗĔН ГЕРОЙĔ И. М. ФЕДОРОВ

Хĕрлĕ Çара кайса фронтра Совет Союз Геройĕн чаплă ятне илме тивĕçлĕ пулнисен йышĕнче пирĕн земляк И. М. Федоров пур. СССР Верховный Совет Президиумĕн 1945 çулхи мартăн 24-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, Иван Михайлович Федорова çав хисеплĕ ята панă.

И. М. Федоров юлташ Тутар республикинче çуралса ÿснĕ. Юлашки çулсенче вăл Канашра пурăннă. Вĕсем, ашшĕпе иккĕшĕ, апат-çимĕç комбинатĕнче ĕçленĕ. Маттур йĕкĕт Ваня комбинатра рабочи пулнă, ашшĕ хуралра тăнă.

...1942-мĕш çул. Вăрçă хĕрсе пырать. Тăван çĕршыв хăрушлăх умĕнче тăрать. Çак вăхăтра Ваньăна, 18 çулхи çамрăка, Хĕрлĕ Çара илеççĕ.

Ваня Совет çĕршывне хĕçпăшалпа сыхлакансен ретĕнче. Вĕсен чаçĕ—фронтра. Çапăçу хыççăн—çапăçу. Нимĕçсем ĕнтĕ хăйсен шăтăкне чакаççĕ. Вĕсене пирĕннисем хĕстерсе пыраççĕ. Умра чăрмав—анлă шыв. Приказ: шыв урлă каçмалла!

Федоров юлташ хăйĕн юлташĕсемпе çав приказа пурнăçа кĕртме каять. Каç. Тĕттĕм. Нимĕн те курăнмасть. Паттăр та шиксĕр салтаксем, вилĕмрен хăрамасăр, хăйсен пĕтĕм вăйне, пултарулăхне хурса, анлă шывăн тепĕр енне каçаççĕ. Кунта вĕсем хăвăрт кăна тăшмана сирсе ывăтаççĕ. Приказ пурнăçа кĕнĕ: малалла çапăçма вырăн йышăннă.

Çакăнта Федоров юлташ, паттăрлăхпа хăюлăх кăтартса, Совет Союз Геройĕн ятне илме тивĕçлĕ пулать.

* * *

Иван Михайловича Герой ятне пани çинчен Канашри тăванĕсем вăрçă чарăннă вăхăтра пĕлеççĕ. Мĕн тери савăнăç! Тăшман парăннă, эпир çĕнтернĕ. Ĕнтĕ мирлĕ пурнăç пуçланать. Канашран кайнă Иван Михайлович Федоров Герой пулса таврăнать.

Совет Союзĕн Геройĕ Федоров халĕ Кавказри пĕр госпитальре выртать. Хăй çырнă тăрăх, унăн сывлăхĕ юсанса пырать.

Т. ИВАНОВ.

Кĕреççĕ те... тухса каяççĕ

Манăн юлташ, нумаях пулмасть госпитальрен сывалса тухса, киле отпуска таврăннă. Эпир унпа Красноармейски районĕн центрĕнчи библиотекăра тĕл пулма килĕшрĕмĕр.

Эпĕ ытларах библиотекăра ларма юратнине пĕлсе, юлташ хавасланса килĕшрĕ. Тепĕр кунне эпĕ библиотекăн тăвăр та тĕттĕм пÿлĕмĕнче каç пуличченех кĕтсе лартăм. Анчах юлташа кĕтсе илеймерĕм. Кĕтсе ларсан-ларсан, комсомол райкомне кайрăм. Кĕнĕ-кĕменех хайхи кĕтнĕ юлташа тĕл пултăм.

— Ăçта çÿретĕн вара эсĕ, библиотекăра тĕл пулатпăр тенĕрен, эпĕ тÿррех кунта килтĕм,—тесе хучĕ юлташăм.

— Эпĕ,—тетĕп,—библиотекăра лартăм, сире кĕтсе илеймерĕм...

Çак сăмахсене илтсен, ман юлташ тĕлĕнсех кайрĕ.

— Библиотека кунта мар-и вара халь, кунтаччĕ-çке вăрçăччен?—тесе хучĕ вăл.

— Ара, кунта комсомол райкомĕ вĕт, библиотекăна ял Совет секретарĕн кабинечĕ пулнă çĕре куçарнă,—терĕ райкомра ĕçлекен.

— Апла, малтан райком пулнă çуртра мĕнле учреждени ĕçлет вара? — ыйтрĕ каллех ман юлташ.

— Ăна апат-çимĕç комбиначĕ пăснă..

Пĕр вăхăтра районри библиотекăн тата комсомол райкомĕн хăйсен начарах мар çуртсем пулнă. Вăл вăхăтра библиотекăна вулакансем те нумай çÿренĕ. Халь библиотекăна хăйĕн пÿртĕнчен урăх тăвăр та тĕттĕм пÿлĕме хĕссе кăларнă. Ăна ял Совет канцелярийĕн пĕр пĕчĕк пÿлĕмне вырнаçтарнă. Кунта калама çук тăвăр, икĕ шкафпа пĕр сĕтелсĕр пуçне, нимĕн те лартма çук. Урлăшĕ икĕ метр, тăршшĕ пиллĕк. Пĕтĕмпе те пĕр чÿрече кăна. Çÿлĕксем çинче тусан айне пулнă кĕнекесем пăтрашăнса выртаççĕ.

Библиотека 10 экземпляр хаçат çырăнса илет. Анчах вĕсене ниçта ларса вулама та çук. Пĕтĕмпе виçĕ пукан, вĕсенчен пĕр пуканĕн ури хуçăк.

Библиотекăна çынсем питех те сахал çÿреççĕ. Вулакансен йышĕ çулталăкра та 150 çынна çеç çитнĕ. Библиотекăра ĕçлекен Семенова юлташăн ĕçлес хаваслăхĕ те пур. Анчах ăна ĕçлеме кирлĕ условисене туса паман. Библиотекăра пуринчен ытла ача-пăча кĕнекисем кăна тĕл пулаççĕ.

— Классиксен кĕнекисем пур-и сирĕн, — тесе ыйтсан:

— Нимĕн те çук çав,—тесе ответлет Семенова юлташ. Библиотека çине районри çутĕç пайĕ те, райсовет исполкомĕ те тивĕçлипе çавăрăнса пăхмаççĕ. Вĕсемшĕн библиотека пуррипе çукки те паллă мар.

Культура учрежденийĕ çине çавăн пек пăхни вулакансене питех те кÿрентерет. ВКП(б) райкомĕ районри библиотекăна çурт тупса парас тĕлĕшпе иртнĕ çултах решени йышăннăччĕ. Çак решени хыççăн райсовет исполкомĕпе районри çутĕç пайĕ: «библиотекăпа клуб валли пирĕн урăх çурт тупса парас тĕлĕшпе çĕнĕ вариантсем пур», терĕç. Анчах çав вариантсем хут çинче кăна тăрса юлчĕç. Библиотека паянхи кун та тăвăр та тĕттĕм пÿлĕмре пурăнать. Райсовет исполкомĕн район центрĕнчи пĕртен-пĕр библиотекăна тивĕçлĕ çурта вырнаçтармалла. Çапла тума ыйтаççĕ вулакансем.

С. ШАДИН.

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.).

Кунта пушартан сыхланас ĕçе тивĕçлĕпе йĕркелемен

СĔНТĔР. Обществăллă пурлăха тата ĕççыннисен пурлăхне пушартан сыхласси пысăк ĕç пулса тăрать. Анчах та хăшпĕр çĕрте çак ĕçри ответлăха туймаççĕха. Çавна пула уйрăм колхозсемпе колхозниксем пушартан пысăк сиен кураççĕ. Ильинка ял Советĕнчи «Хлебороб» колхозри чăх-чĕп ферминче ĕçлекенсем пурăнакан çуртăн мăрйи юсавсăр пулнă, çавăн пирки пушар тухнă та вăл çунса кайнă. Янăм ял Советĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозра пушар хуралçи Петров япăх ĕçленине пула пушар тухса, хурал пÿрчĕ тата унти колхоз пурлăхĕ 7.500 тенкĕлĕх çунса кайнă. Ярославка ял Советĕнчи «Ударник» колхозри А. Максимова колхозница хăйĕн 5 тата 7 çулхи ачисене каçхине иккĕшне çеç киле хăварнă. Вĕсем çав вăхăтра кăмака çине типĕтме хунă сÿсе вут тивретсе янă. Вара пушар тухнă та ачисем иккĕшĕ те çунса кайнă.

Çак асăннă фактсем хăшпĕр колхозсенче пушар дружинисем çителĕксĕр ĕçленине кăтартаççĕ. Вĕсем колхозниксем хушшинче пушара хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе ăнлантару ĕçне пуçарман, чылай çĕрте пушарпа кĕрешмелли инвентарьсем хатĕр мар. Юнкă ял Советĕнчи Войков ячĕпе тăракан колхозах илер. Кунта кăçал çĕнĕ юсавлă насоса хĕлĕпех юр айĕнче лартнă. Сĕнтĕр ял Советĕнчи «Парижская Коммуна» колхозра пушар сарайне кĕл кĕлечĕ туса хунă. Кун пек тĕслĕхсем районри ытти колхозсенче те пур.

Çуллахи шăрăх кунсем пуçланаççĕ. Çуллахи вăхăтра пушартан сыхланассине уйрăмах вăйлатмалла. Кашни ял Совет тата колхоз председателĕн, учрежденисемпе организацисен руководителĕсен пушартан сыхланмалли правилăсене тĕрĕс пурнăça кĕртсе пымалла. Кашни колхозра çителĕклĕ таран пĕвесем тумалла, çурт-йĕр таврашĕнчи çÿп-çапсене тасатмалла. Пушар сарайĕсемпе депосенче талăкĕпех, пĕр чарăнмасăр, çынсемпе лашасем хурал тăрассине йĕркелемелле.

М. ИСАЕВ.

Драмкружок лайăх ĕçлет

ШĂХАСАН. Хвăспÿрт Кипечри вăтам шкулта вĕренÿ çулĕ пуçлансанах драмкружок организацилерĕç. Кружок руководителĕ пулса А. Яковлев учитель ĕçлет.

Кружок членĕсем кăçал шкулта кăна мар, сывăхри ялсене те кайса спектакльсем лартса кăтартрĕç. Спектакльсем пуçланас умĕн докладсемпе каласусем иртнерĕ. Куракансене уйрăмăнах А. Кăлганăн «Анисса», Айзманăн «Телейлĕ каç» пьесисем килĕшрĕç.

Халĕ драмкружок Чăваш республики 25 çул тултарнă уяв тĕлне çĕнĕ постановка хатĕрлет.

Г. ЕФИМОВ.

Пурçăн хуртне пăхма хатĕр пулар

Халăх хуçалăхĕнче пурçăн мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăни пуриншĕн те паллă. Пурçăн пур çĕрте те кирлĕ. Унпа оборона промышленноçĕнче те, килти пурнăçра та анлăн усă кураççĕ.

Пурçăн çиппи хăйĕн пахалăхĕпе уйăрăлса тăрать. Вăл вăрăм, çăмăл, электричество энергине чарать тата ытти йышши пур çипсенчен те çирĕпрех. Çĕрмамăк сÿсĕн вăрăмĕшĕ 5 сантиметр, çăм тăршшĕ 50—60 сантиметр, йĕтĕн сÿсĕ чи вăрăмми пĕр метр çурă тăршшĕ пулать пулсан, пурçăн хурчĕ пĕр кокона чĕркенĕ çиппĕн тăршшĕ 500—800 метра çити пулать.

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Пурçăн тăвас ĕçе малалла ÿстерсе пымалли мероприятисем çинчен» йышăннă постановленире уйрăмăнах юман çулçи çисе ÿсекен пурçăн хурчĕсене пур майпа та ĕрчетмеллине кăтартса панă.

Юман çулçипе пурăнакан пурçăн хуртне пирĕн колхозсенче ĕрчетме пур майсем те çителĕклĕ. Юман çулçипе пурăнакан пурçăн хуртне пирĕн республикăра 1941 çулта 53 колхозра ĕрчетнĕ. Вăл колхозсем государствăна 5 пин килограмм ытла кокон туса панă. Шупашкар районĕнчи «Чембек» колхоз пурçăн хурчĕ ĕрчетсе государствăна 167 килограмм кокон панă, Красноармейски районри «Красный Бордепер» колхоз пурçăн туса илмелли плана 195 процент, Куславкка районĕнчи «Новая жизнь» колхоз—168 процент таран пурнăçланă.

1942 çулта юман çулçипе пурăнакан пурçăн хуртне республикăри 23 колхоз ĕрчетнĕ, вĕсем государствăна 1200 килограмм кокон пухса панă. Çак тĕслĕхсем ĕнтĕ пирĕн Чăваш республикинче те пурçăн хуртне малалла вăйлăн ĕрчетме лайăх майсем пуррине кăтартса параççĕ.

Анчах юлашки икĕ çул хушшинче, пурçăн хурчĕн çăмартине республикăна илсе килменнине пула, ĕç вăхăтлăха чарăнса тăчĕ. Кăçал пирĕн республикăра 50 колхозра пурçăн хуртне ĕрчетме тытăнмалла. Çак ĕç уйрăмăнах Куславкка, Красноармейски, Ишлей, Сĕнтĕрвăрри, Муркаш, Октябрьски, Сĕнтĕр, Вăрмар, Çĕрпÿ тата Шупашкар районĕсенчи колхозсенче анлăн сарăлмалла.

Пурçăн хурчĕсем юман çулçипе тăранса пурăнаççĕ. Республикăра пирĕн юман вăрмансем пиншер гектар шутланаççĕ. Хунавлă юман вăрманĕсем кăна 6 пин гектара яхăн шутланаççĕ. Çав вăрманпа усă курса, пурçăн хуртне 300 колхозра ĕрчетме пулать. Вĕсем государствăна 65 тонна ытла пурçăн хурчĕн коконне пама пултараççĕ.

Кунсăр пуçне, колхозсен çĕрĕ çинче те хунавлă юман вăрманĕсем темиçе пин гектар шутланаççĕ, вĕсемпе те усă курма май пур.

Правительство пурçăн хуртне ĕрчетес ĕçе яланах пысăка хурса, ăна вăйлатма пулăшса пырать. Колхозсене пурçăн хуртне ĕрчетме сывăхра вăрмансем 20—30 гектар таран уйăрса параççĕ. Пурçăн хуртне çитермелли юман çÿллĕшĕ 2,5—3 метр пулмалла. Çÿллĕ ÿсекен юмансен турачĕсене хуртсене касса çитереççĕ. Хуртсене çиме лайăх пултăр тесе, çÿллĕ юмансене тымар çыххи тĕлĕнчен касса хунав кăлармалла тăваççĕ. Юмансене хунава яма çуркунне сĕткен кĕрес умĕн касас пулать. Вăрман участокĕсене малтанах хатĕрлемелле, уйрăм кварталсене уйăрмалла, чиккисене юпасем лартмалла.

Пурçăн хурчĕсене кирлĕ пек пăхса усрама колхозсен халех хурт гренине (пурçăн хурчĕ пулакан çăмартана) кăларма тата малтанхи хуртсене пăхса усрама уйрăм çуртсем хатĕрлемелле. Çурт ăшă, çутă пулмалла тата унта яланах таса сывлăш тăмалла. Пĕр килограмм грена кăларма 25—30 тăваткăл метрлă çурт кирлĕ.

Хатĕрленĕ çуртра тата хурт ĕрчетмелли япаласене пурне те дезинфекци тумалла, дезинфекци тума пĕр литр 40 процентлă формалина 9 литр шывпа хутăштарнă шĕвек кирлĕ. Гренăсене хуртсем кăларма хурас умĕн 2—3 кун маларах çурта сÿнтермен извеçпе шуратмалла. Касса илнĕ юман тураттисене лартса хуртсене çитерме çителĕклĕ таран вăлашкасемпе чÿлмексем пулмалла.

Пурçăн хурчĕсене лайăх пăхса усрама тата пурçăн коконĕсене нумайрах пухса илме колхозра уйрăм бригада е звено организацилемелле.

Пурçăн хурчĕсене ĕрчетес ĕçе уйрăмăнах çамрăксем, комсомолецсемпе пионерсем анлă хутшăнмалла. Таврара юман вăрманĕсем пур колхозсенчи комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем пурçăн хурчĕсене ĕрчетессине хăйсем çине илмелле. Колхозсенче пурçăн хурчĕсем ĕрчетес ĕçе вĕренмелли кружоксем организацилемелле.

Партипе совет организацийĕсен пурçăн хуртне ĕрчетесси мĕнле пысăк вырăн йышăнни çинчен колхозниксене ăнлантарса памалла. Пурçăн хурчĕ ĕрчетме пысăк тăкаксем тухмаççĕ тата ку ĕçе кашни çынах тума пултарать.

Агроном **Н. КОНДАКОВ.**

„Франко режимне пĕтерсе лартмалаа“

АНГЛИ ХАÇАЧĔ ФРАНКО ÇИНЧЕН ÇЫРНИ

ЛОНДОН, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). «Стар» хаçат хăйĕн умстатьинче Францин консультаци ассамблейин ют çĕршыв ĕçĕсен комиссийĕ Франкона сирпĕтме ыйтни çинчен çапла çырать: «Ибери çурутравĕ фашизмăн Европăри юлашки вучахĕ пулса тăрать. Çав çурутрав çинче пурăнма пуçланă 100.000 нимĕç лăпкă пурнăçа пăтратса яма пултаракан вăйлă вучах пулса тăраççĕ. Вĕсем пурте — нацистсем, вĕсене унта пурăнма Гитлерăн Европăри чи тĕрĕс тарçи Франко май туса панă. Франко режимне пĕтерсе лартмалла. Франко Европăри мирлĕ пурнăçа яланах хăратса тăма пултарнă вăхăтра союзниксем ун çине аякран кăна пăхса тăма пултараймаççĕ».

КОНСТАНЦА ХУЛИНЧЕ ФАШИСТЛА ТЕРРОРИСТСЕН ОРГАНИЗАЦИНЕ ТУПНĂ

БУХАРЕСТ, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Румынсен Констанца портĕнче террористсен организацине тупнă. Çав организацие румынсен Германире пурăнакан паллă легионерĕсем (фашисчĕсем) ертсе пынă. Ăна «хирĕç тăмалли центр» тесе ят панă. Çав организацире паллă легионерсем Вольмер, Паску, Опроке, Негою тăнă. Çав организаци Констанца хулинчи концентрациллĕ лагерьтен чылай гитлеровецсене тартнă. Вăл гитлеровецсене тартас ĕçре «мотокультура» обществинче тăракан чиновниксен ушкăнĕ пулăшнă. Тытса хупнă легионерсен хваттерĕсенче хĕçпăшал, гранатăсем, боеприпассем тупнă. Çав организацин задачи лагерьтен тарнă нимĕçсемпе пĕрле саботаж тата террор тăвасси пулнă.

ОСЛО ХУЛИ ÇЫВĂХĔНЧЕ ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ТУНĂ ВИЛĔМ ЛАГЕРЬНЕ ТУПНĂ

ЛОНДОН, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Норвегин информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, Норвегин шалти фронт отрячĕсем Болэрн утравĕсем çинче вилĕм лагерьне тупнă, ăна нимĕçсем тыткăна лекнĕ совет çыннисем валли тунă. Болэрн утравĕсем Осло-Фиорда кĕмелли вырăнта лараççĕ. Çав лагерьте ăна тупнă чухне темиçе çĕр çын пулнă. Çав совет çыннисем пурте чирлĕ пулнă тата, чуралăхри ĕçпе асапланса, шалтах халран кайнă. Унта мĕн чухлĕ çын пĕтни халĕ паллă мар-ха, анчах та темиçе çĕр çын ытла пĕтни курăнсах тăрать. Çав утравсем çине Норвегин шалти фрончĕн вăйĕсем пырса кĕнĕ вăхăтра лагерьте 50 çын ытла çав тери халран кайнă пирки, вĕсене вилесрен çăлса хăварма май пулман.

ГИТЛЕРПА ГИММЛЕРĂН ТĂВАНĔСЕНЕ ТЫТСА ХУПНĂ

ЛОНДОН, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин американецсен 3-мĕш армийĕн штабĕ çумĕнчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: майăн 27-мĕшĕнче Гитлерăн качча кайнă икĕ йăмăкне тытса хупнă. Вĕсем çаксем: Ангела Хаммич тата Паула Вольф. Рейтер агентствин акăлчансен 2-мĕш армийĕн штабĕ çумĕнчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: 2-мĕш арми чаçĕсем Генрих Гиммлерăн тăванне, эсэсовецсен çарĕнче тăнăскерне, тыткăна илнĕ.

ГИТЛЕРĂН ХОРВАТИРИ ТАРÇИСЕНЕ ТЫТСА ХУПНĂ

БЕЛГРАД, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Загреб хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Югослави влаçĕсем Павелич «правительствинче» «премьер-министр» пулнă Никола Мандича, юстици «министрĕ» пулнă Ханкие, çутĕç «министрĕ» пулнă Маканеца тата ыттисене те тытса хупнă. Вĕсене пурне те çавăнтах тĕрмене хупса лартнă.

АРГЕНТИНĂРИ ФАШИСТСЕНЕ ХИРĔÇ КĔРЕШЕКЕН ÇЫНСЕНЕ ТЫТСА ХУПНИ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк Геральд трибюн» хаçат Аргентинăра пур вырăнсенче те фашистсене хирĕç кĕрешекен паллă çынсене хĕсни çинчен тата вĕсене хупса лартни çинчен пĕлтерет. Майăн 24-мĕшĕнче Аргентина правительстви Аргентинăран латинла Америкăри паллă каррикатуриста Саласара хăваласа кăларнă. Паллă юриста Сатановские, Мендос провинцийĕнче губернатор пулнă тата çав провинцирен сенатор пулса тăракан Сеура тата ыттисене те тытса хупнă. Унта халь çынсене нихăçанхинчен те ытларах тытса хупаççĕ.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШÿЛЛĔ ШТАТСЕНЧЕ САМОЛЕТСЕМ ТУСА КĂЛАРАССИ ЧАКАТЬ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Вашингтон хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен çар министерстви çапла пĕлтернĕ: Европăри вăрçă пĕтнĕ май тата ленд-лиз тăрăх таварсем сахалтарах тăратмалла пулнипе, малашне самолет туса кăларасси питĕ хытă чакать. Çак çулталăк çурăра туса кăларма йышăннă 17.000 самолета халĕ ĕнтĕ туса кăлармаççĕ. Самолетсем туса кăларакан чи пысăк фирмăсенче пуринче те тенĕ пекех самолетсем туса кăларасси чакать.

САН-ФРАНЦИСКĂРА АМЕРИКАНЕЦСЕМПЕ ВЫРĂССЕН ИНСТИТУТĔНЧЕ ПĔРЛЕШНĔ НАЦИСЕН КОНФЕРЕНЦИНЕ КИЛНĔ СОВЕТ ДЕЛЕГАЦИЙĔ ЯЧĔПЕ ПУЛСА ИРТНĔ АПАТЛАНУ

САН-ФРАНЦИСКО, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Сан-Францискăра Американецсемпе вырăссен институчĕ Пĕрлешнĕ нацисен конференцийĕнчи Совет Союзĕ, Украина тата Белоруссия делегацийĕсен ячĕпе апатлану туса иртнерĕ. Апатланура 500 çын ытла пулнă, вăл шутра паллă деятельсем нумай пулнă. Громыко, Мануильский, Киселев юлташсем, Калифорни штатĕнчи губернатор Уоран, республиканецсен партийĕн деятелĕ Крам, Американецсемпе вырăссен институчĕн пуçлăхĕ Роберт сăмах тухса каланă. Тухса калакансем пурте малашнехи мирлĕ пурнăçа сыхласа тăмашкăн Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Совет Союзĕ туслăн çыхăнса тăма кирлине кăтартса панă.

КВИСЛИНГА СУД ТУМА ПУÇЛАНĂ

СТОКГОЛЬМ, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Майăн 26-мĕшĕнче Осло хулинче Квислинга суд тума пуçланă. Ăна тăван çĕршыва сутнăшăн, тăшманпа пĕрле ĕçленĕшĕн, хăй çĕршывĕн çыннисене вĕлерес тесех вĕлернĕшĕн айăплаççĕ. Квислинга главнăй судья Гуннар Гюльбрандсен суд тăвать, хÿтĕлессе верховнăй суд адвокачĕ Хенрик Берг хÿтĕлет.

«Стокгольмс тиднинген» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, айăпласа çырнă актăн тĕп пункчĕсем çакăн пек: вăрçă вăхăтĕнчи законăн статьисем кăтартса панă тăрăх, Квислинга тăван çĕршыва сутнăшăн, Норвегие ют çĕршыв аллине пама пулăшнăшăн, вăрçă вăхăтĕнче тăшмана пулăшса тăнăшăн айăплаççĕ.

Çавăн пекех тата Квислинга государствăна тытса тăрас йĕркене законсăр майсемпе улăштарнăшăн тата çынсене вĕлернĕшĕн айăплаççĕ.

Айăплакан асăрхаттарса каланă тăрăх, Квислинга айăпласа çырнă хальхи акт малтанлăха çырнă акт кăна пулса тăрать, вăл акт суд пынă май самаях аслăланма пултарать.

Айăпласа çырнă акта вуласа панă хыççăн государство енчен айăплакан Квислингран: эсĕ хăвна ху айăплă тесе йышăнатăн-и?—тесе ыйтнă. Квислинг: çук, йышăнмастăп,—тенĕ. Унтан Квислингран судья çапла ыйтнă: сана Норвеги халăхĕ влаçа ху аллуна илме хушрĕ-и?—тенĕ. Квислинг кăна хирĕç нимĕн те каламан. Пĕрремĕш лару вĕçĕнче суд хăйĕн çакăн пек йышăнăвне пĕлтернĕ: Квислинга суд ларăвĕсем пуçланиччен тĕрмере тытмалла.

ЛĂПКĂ ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешÿллĕ командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Филиппин утравĕсем çине аннăранпа американецсен 48.044 çын пĕтнĕ, японецсен пĕтĕмпе 378.427 çын пĕтнĕ.

Американецсен йывăр бомбардировщикĕсем Формоза утравне, çавăн пекех тата японецсен Франци Индо-Китайĕнчи сооруженийĕсене тата Шанхайри горючи складчĕсене тапаннă.

ВАШИНГТОН, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Америка линкорĕсем, крейсерĕсем тата ытти карапĕсем те Окинава утравĕ çинче Сюрирен кăнтăртарахра Японии çарĕсем тăракан вырăнсене хаяррăн пенĕ. Американецсен 10-мĕш армийĕн чаçĕсем çаплах малалла тапăнса пынă. Ытти çарсем, çĕнĕрен наступлени тума хатĕрленсе, унччен туртса илнĕ позицисене çирĕплетнĕ. Хăвăрт çÿрекен авианосецсем çинчен вĕçсе улăхнă самолетсем Рюкю утравĕн çурçĕр пайне тапаннă.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШÿЛЛĔ ШТАТСЕН ÇАРĔН ÇЫН МĔН ЧУХЛĔ ПĔТНĔ

ВАШИНГТОН, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен çар министерствипе тинĕс министерстви çапла пĕлтернĕ: çак çулхи майăн 14-мĕшĕччен Америка çарĕпе флотĕнче мĕн пурĕ 996.089 çын пĕтнĕ. Вăл шутран Америка çарĕнче 181.739 çын вилнĕ, 550.506 çын аманнă, 57.802 çын пĕр хыпарсăр çухалнă, 96.478 çын тыткăна лекнĕ; тинĕс çар флотĕнче—42.807 çын вилнĕ, 52.005 çын аманнă, 10.506 çын пĕр хыпарсăр çухалнă, 4.247 çын тыткăна лекнĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Канашри финанс техникумĕ 1-мĕш курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Техникум финанс органĕсенче бюджет учечĕпе ĕçлекен бухгалтерсене тата государство бюджечĕпе налогсем тĕлĕшпе ĕçлекен финансистсене вĕрентсе хатĕрлет.

Техникумра 3 çул вĕренмелле.

Техникума 14 çултан пуçласа 25 çула çитнисене, вăтам шкулта 7 çул вĕреннисемпе тан пĕлекеннисене илеççĕ.

Заявленисене июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 20-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Заявленипе пĕрле çак документсене тăратмалла: а) ăçта миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство (свидетельствăна хăйне, копине мар), б) хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство (каллех свидетельствăна хăйне), в) автобиографи, г) сывлăх çинчен калакан справка, д) çар тĕлĕшпе мĕнле шутланса тăнине кăтартакан справка (ăна çара кайма тивĕçлисен памалла), е) 3 сăн ÿкерчĕкĕ.

Техникума илмелли экзаменсем сентябрĕн 21-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче пулса иртеççĕ, вĕсем çак предметсемпе пулаççĕ: вырăс чĕлхипе тата литературипе (çыртараççĕ тата сăмахпа калаттараççĕ), математикăпа (çыртараççĕ тата сăмахпа калаттараççĕ) тата Конституципе (сăмахпа калаттараççĕ).

Отличниксене экзаменсăрах илеççĕ.

Вĕренекенсене уйăхне 80 тенкĕрен пуçласа 150 тенкĕ таран стипенди параççĕ тата II-мĕш категорири рабочисен нормисемпе çăкăр тата ытти продуктсем параççĕ. Хваттер çуккисене общежитие е хваттере вырнаçтараççĕ. Столовăй пур.

Техникум адресĕ: гор. Канаш, Комсомольская ул., 9.

Чăвашпотребсоюзăн суту-илÿпе кооперации шкулĕ çак отделенисене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет: райпотребсоюзсен инструктор-ревизорĕсене вĕрентсе хатĕрлекен отделение (унта тĕп дисциплинăсем—бухгалтери учечĕ тата ревизи) тата чĕртавар хатĕрлекенсене вĕрентсе кăларакан отделение.

Суту-илÿпе кооперации шкулне 16 çултан кĕçĕн маррисене, 7-мĕш класран вĕренсе тухнисенчен кая мар пĕлекеннисене илеççĕ.

Шкулта пĕр çул вĕренмелле.

Сентябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме тытăнаççĕ.

Заявленисене июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа августăн 15-мĕшĕччен илеççĕ.

Заявленипе пĕрле çак документсене тăратмалла: ăçта миçе çул вĕреннине кăтартакан справка тата ĕçленĕ вырăнта панă справка.

Вĕренекенсене уйăхне 250 тенкĕ стипенди параççĕ, столовăйра кунне икĕ хут апат çитереççĕ тата общежитие вырнаçтараççĕ.

Адрес: г. Чебоксары, Театральная, 1/5, Учебный комбинат Чувашпотребсоюза.

СССР Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Чăваш республикинчи Уполномоченнăйне шофер, инспекторсем тата экономистсем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, Дом Советов, Уполнаркомзаг.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, издательство конторин — 0—23.

НТ 00604. Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ [illegible] Тираж [illegible]